Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

82 (7722) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи октябрĕн (юпа) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕкле

Муркашра Тыр-пул уявĕ иртрĕ

## Ĕç кăтартăвĕсем кашнинех савăнтараççĕ



Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. Ачаран кашниех пĕлекен çак ваттисен сăмахĕ кăçал районти çĕр ĕçченĕ тĕлĕшпех пулчĕ. Ĕçне пĕлекен хресчен кăçал çумăрăн кашни тумламĕпе туллин усă курса типĕ çанталăкра та пит хĕретмелле мар тухăç туса илчĕ, ăна вăхăтра пуçтарса кĕртсе кĕлетсене упрама хучĕ. Малта пыракан çĕнĕ технологисемпе анлăн усă курса тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене, çĕр улмипе пахча çимĕçе, тымар çимĕçе тухăçлă туса илнĕ хресчен Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче irttерекен Тыр-пул уявне те район çыннисем юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче пĕр çын пек пуçтарăнчĕç. Кунĕ те уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмлетме валлиех хĕвеллĕ те ăшă пулчĕ. Çавна кура ирлесех Муркашра хаваслă юрă-кĕвĕ янăрани те уява пыраканăн кăмăлне çĕклерĕ, район администрацийĕпе «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнчи лапамра йĕркеленĕ куравра ыттисен ĕçĕ çине пăхса тĕлĕнни çĕнĕ шухăшсем çуратрĕ.

**ЧЫС ТА МУХТАВ**

Вăхăт çитрĕ. «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче йĕркеленĕ сцена çине район ертӳçисем, республикăран тата кӳршĕ районсенчен килнĕ хăнасем, ĕç паттăрĕсем хăпарчĕç. Пухăннисене Тыр-пул уявĕ уçăлни пирки пĕлтерсе район пуçлăхĕ Ю. Иванов саламларĕ, тухăçлă ĕçленĕшĕн тав турĕ, умри чикĕсене палăртса Муркашсем вĕсене те çĕнессе шанни пирки пĕлтерчĕ.

– Маттур ĕçлерĕр пулсан, сирĕн паян туллин савăнма та ирĕк пур. Савăнăр та кӳршĕсен ĕçĕсемпе ăнăçăвĕсене пăхса çĕнĕ тĕллевсем палăртăр. Эсир кирек епле çанталăк условийĕсенче те тухăç илме пултарнине кăçал аванах куртăмăр. Апла пулсан пирĕн сирĕнпе малашлăх пур. Ыран вара ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсен тата продукци тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен професси уявĕ. Пирĕн районшăн вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнăран пурсăра та ун ячĕпе саламлатăп, – терĕ уява уçса Юрий Александрович.

Çанталăк шăрăх тăнине пăхмасăрах кăçал Муркашсем уй-хир ĕçĕнче иртнĕ çулхинчен ăнăçуллăрах пулчĕç. Çакна тĕслĕхсемпе çирĕплетсе уява пухăннисем умĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Ананьев анлă доклад туса пачĕ.

– Агропромышленность комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунтан парăннă пиншер çын вăй хуни района тивĕçлĕ шайра аталанса пыма пулăшать.

Хăйсен професси уявне ял хуçалăх ĕçченĕсем кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Кăçалхи уй-хир ĕçĕсенче эпир наука çитĕнĕвĕсемпе пĕлсе усă куракан, ял хуçалăх техникине тăтăш çĕнетсе агротехника ыйтăвĕсене пăханса ĕçлекен, çĕр пахалăхне çулсерен хăпартса пыракан, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине куртăмăр. Ку вăл çапла пулмалла та.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене кăçал ампар виçипе 30 пин тонна пухса кĕртрĕмĕр, ку вăл пĕлтĕрхинчен 1 пин те 800 тонна ытларах. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 24,2 центнер пулчĕ. Пĕрешкел условисенчех ăнăçлăрах ĕçлекенсем те пур. Акă Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра вăтам тухăç 33,6 центнер, Ильич яч. хис. – 33,1 центнер, «Ударник» - 32,7, «Восток» - 31,1, «Герой» - 30 центнер. Муркашри чăх-чĕп фабрики 76 гектар çинчен пĕр гектар пуçне 50 центнер таран тĕш тырă пухса кĕртме пултарчĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: ĕç çи паттăрĕсем.**

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

Смотр-конкурс итогĕсем

## Хăшĕсем-ха чи пултаруллисем?

Ялсене симĕслентерес тата тирпей-илем кĕртес енĕпе районта çулленхи смотр-конкурс irttересси пирки 2009 çулхи майăн 22-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ 305-мĕш номерлĕ йышăну тунăччĕ. Халĕ вара конкурс комиссийĕ çак смотр-конкурсăн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ 2009 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче 392-мĕш номерлĕ хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн уйрăм номинацисенче чи пултаруллисем тесе çаксене палăртнă тата вĕсене укçан премисем парса хавхалантарма йышăннă.

**«Ялсене симĕслентерессси тата тирпей-илем кĕртесси»**

1-мĕш вырăн – Шетмĕпуç ялĕ (Шетмĕпуç ял тăрăхĕ) – 10 пин тенкĕ.

2-мĕш вырăн – Шупуç ялĕ (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ) – 7,5 пин тенкĕ.

3-мĕш вырăн – Чуманкасси ялĕ (Чуманкасси ял тăрăхĕ) – 5 пин тенкĕ.

**«Организаци территорине симĕслентерессси тата тирпей-илем кĕртесси, цветниксемпе кану кĕтесĕсене йĕркелесси»**

1-мĕш вырăн – «Моргаушская» чăхчĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятийĕ (Катькас ял тăрăхĕнчи Катькас ялĕ) – 3 пин тенкĕ.

2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене никама та паман.

**«Социаллă сфера учрежденийĕсен территорийĕсене симĕслентерессси тата тирпей-илем кĕртесси»**

1-мĕш вырăн – Мăн Сĕнтĕрти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ) – 3 пин тенкĕ.

2-мĕш вырăн – Ваçкассинчи Культура çурчĕ (Уйкас Янасал ял тăрăхĕ) – 2 пин тенкĕ.

3-мĕш вырăн – «Василек» ача сачĕ (Йӳçкасси ял тăрăхĕ) – 1 пин тенкĕ.

**«Уйрăм çынсен хуçалăхĕсен территорийĕсене симĕслентерессси тата тирпей-илем кĕртесси»**

1-мĕш вырăн – Габил Гашамович Мусаев (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мăн Сĕнтĕр ялĕ, Садовая урам, 1 «а» çурт) – 3 пин тенкĕ.

2-мĕш вырăн – Галина Михайловна Мазикова (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕ) тата Петр Трофимович Медунгин (Юнкă ял тăрăхĕнчи Çармăçкасси ялĕ, Мир урамĕ, 43-мĕш çурт) – 2-шер пин тенкĕ.

3-мĕш вырăн – Николай Васильевич Андреев (Катькас ял тăрăхĕнчи Катькас ялĕ, Пушкин урамĕ, 2-мĕш çурт) – 1 пин тенкĕ.

**«Цветниксемпе кану кĕтесĕсене илемлетесси»**

1-мĕш вырăн – Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул (Чуманкасси ял тăрăхĕ) – 1,5 пин тенкĕ.

2-мĕш вырăн – Александр Петрович Ванюшкин (Хорнуй ял тăрăхĕнчи Хорнуй ялĕ, Садовая урам, 23-мĕш çурт) – 1 пин тенкĕ.

3-мĕш вырăн – Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул (Ярапайкасси ял тăрăхĕ) – 0,5 пин тенкĕ.

Çĕнтерӳçĕсене хавхалантармалли 42,5 пин тенкĕ укçана район бюджетĕнчен уйăрма палăртнă.

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн «Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен» 2009 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 986 №-лĕ Указĕпе килĕшӳллĕн тата Чăваш Республикинче ача прависемпе интересĕсене ăнăçлă хӳтĕлессине тивĕçтерес тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй должноçне туса хурас.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Чăваш Республикинче Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн право статусне, прависене тата тивĕçĕсене çирĕплетекен Чăваш Республикин «Чăваш Ресубликинче ачасене социаллă пулăшу парасси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проектне Чăваш Республикин Патшалăх Канашне пăхса тухма тăратма туса хатĕрлемелле.

3. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2009, юпа, 9, 67 №.

Тăхăр уйăх итогĕсем

## Промышленность

Кăçалхи январь–сентябрь уйăхĕсенче районĕпе пĕтĕмпе 710522,1 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 58,1 процент пулать. Вăл шутран промышленность продукцине – 450688,1 пин тенкĕлĕх е 46,2 процент.

Пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ вăхăтĕнче те ӳсĕмлĕ ĕçлекен предприятисем районта çук мар. Акă «Сундырь-Хлеб» ООО иртнĕ 9 уйăхра 25918 пин тенкĕлĕх (иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 104,7 процент), «Муркашри сĕт завочĕ» ООО 85004 пин тенкĕлĕх (101 процент), «Моргауши-Хлеб» ООО 19887 пин тенкĕлĕх (122,3 процент), Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ 12460,1 пин тенкĕлĕх (130,2 процент), Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ 9362 пин тенкĕлĕх (107,7 процент), «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ 34232 пин тенкĕлĕх (114,6 процент), Муркаш почтампчĕ 14748 пин тенкĕлĕх (133,6 процент) продукци туса хатĕрленĕ е ĕçсем пурнăçланă тата услугăсем панă.

Промышленность продукцийĕ туса кăларассипе района каялла туртакансем хушшинче вара «Муркашри кирпĕч завочĕ» ОАО (41,4 процент), «Моргаушавтотехсервис» ОАО (52,1 процент), «Сеспель» ООО (23 прорцент), «Вита» ООО (55,7 процент).

Райадминистраци пуçлăхĕн йышăнăвĕ

## Тĕрĕслев пуçланать

Ылтăн кĕркунне иртнĕ май умра – хура кĕр кунĕсем. Вĕсем хыççăнах сивĕ хĕл те çитĕ, черетлĕ ял хуçалăх çулĕ пуçланĕ. Апла пулсан ыранхи кунпа пурăнаканăн паян çанă таврсах хĕл кунĕсене хатĕрленмелле. Халĕ калани ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ытти харпăрлăх формиллĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене те пырса тивет. Вĕсен паян тирпейлĕ те ăшă çанталăкпа усă курса иртнĕ çу тата кĕр кунĕсенче хирте ĕçленĕ ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартасси çине тимлĕх уйăрмалла. Çав техникăпах çитес çулхи уй-хир ĕçĕсене те пуçламалла-çке. Çакна шута хурса юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче уй-хир ĕçĕсене хутшăннă техникăна хĕллехи управа лартассипе октябрĕн 12–28-мĕшĕсенче смотр irttересси пирки йышăну тунă. Ăна тивĕçлĕ шайра иртterме комисси йĕркеленĕ. Унăн председателĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. К. Ананьев.

Тĕрĕслев материалĕсем район хаçачĕн страницисенче кун çути курĕç.

**А. БЕЛОВ.**

Демографи ыйтăвĕсемпе

## Халăх йышĕ чакать

Районти ЗАГС пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, хыçа юлнă 9 уйăхра пурĕ 291 ача çуралнă. Ытларах пепкесем Муркаш (45), Москакасси (30) тата Çатракасси (28) ял тăрăхĕсенче çуралнă.

Çак тапхăрта вара районта пурĕ 477 çын вилнĕ.

2009 çулхи тăхăр уйăхра 168 çĕнĕ çемье йĕркеленнĕ, пĕлтĕрхи виçĕ кварталта – 151. Кăçалхи туйсенчен 88-шĕ виççĕмĕш кварталта пулнă. Вĕсенчен 10-шĕ – Муркаш ял тăрăхĕнче.

Уйрăлакансем вара кăçалхи январь–сентябрь уйăхĕсенче 59 мăшăр пулнă.

Саламлатпăр

Хисеплĕ те пултаруллă çынна, Атапай ялĕнче çуралса ӳснĕ, Атапай шкулĕн попечительсен совечĕн ертӳçине **Павел Николаевич ВЯЗОВА** 50 çулхи юбилейпа саламлатпăр. Унăн ырă ĕçĕсемшĕн ăна тав туса çĕре çити пуç таятпăр. Ĕçре ăнăçусем, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Атапай шкул коллективĕ.**